Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

1 (7746) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи январĕн (кăрлач) 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пултаруллă яш-кĕрĕм

## Президент стипендине тивĕçрĕç



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Витальевна Цветкова Муркашри ача-пăча искусство шкулĕнче вăй хурать. Шкултанпах ӳкерме юратнăран вăл малтан Шупашкарти педагогика колледжне вĕренсе пĕтернĕ, хыççăн вара Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ.***

***Тăваттăмĕш çул хастар вĕрентекен ачасене ӳнер тĕнчипе паллаштарса унăн вăрттăнлăхĕсене уçса парать. Хăйĕн вĕренекенĕсене тĕрлĕ конкурссене тăтăшах явăçтарать. Призлă вырăнсем те пĕрре мар çĕнсе илнĕ унăн вĕренекенĕсем. «Пирĕн хушма вĕрентӳ учрежденийĕнче ӳнерĕн пĕр-пĕр енне кăмăллакан, ăна хăйсенче аталантарас текен ачасем килеççĕ. Çавăнпах вĕсемпе ĕçлеме те килĕшет», – тет Светлана Витальевна. Кăçал вара вăл Президент стипендиачĕ пулма тивĕçрĕ.***

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хăйĕн йышăнăвĕпе тĕрлĕ енлĕ пултарулăхпа палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене ятарлă стипенди парса хавхалантарма йышăннине паян тин пĕлмĕстпĕр ĕнтĕ. Пирĕн районăн чи хастар çамрăкĕсем те ăна çулсеренех илсе тăраççĕ. 2010 çулта та Муркаш районĕн пултаруллă яш-кĕрĕмĕ хушшинче Президент стипендине илме тивĕçлисем пурри савăнтарать. Акă вĕсем:

**Татьяна Владиславовна Андреева**, Москакассинчи вăтам шкулта вĕренекен;

**Петр Вячеславович Борзаев**, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн диагностикăпа консультаци центрĕ çумĕнчи «Родничок» çамрăк çемье клубĕн членĕ;

**Ольга Владимировна Егорова**, Орининти вăтам шкулта вĕренекен;

**Федор Петрович Журавлев**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторĕ;

**Кристина Олеговна Иванова**, Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен;

**Сусанна Михайловна Лукина**, Муркашри тĕп больницăри «Çамрăк чĕресем» ятлă çамрăксен канашĕн ертӳçин çумĕ;

**Елена Владиславовна Пушкина**, «Муркашри сĕт завочĕ» акционерсен уçă обществин производствăпа технологи лабораторийĕн ертӳçи;

**Алина Васильевна Федорова**, «Моргаушская» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн юрисконсульчĕ;

**Людмила Валерьевна Храмова**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти акăлчан чĕлхине вĕрентекен;

**Светлана Витальевна Цветкова**, Муркашри ача-пăча искусство шкулĕн преподавателĕ.

Ытти çамрăксене вара малашне активлăрах пулса стипендиатсенчен тĕслĕх илме сĕнетпĕр.

Ыр кăмăллăх

## Марафон малалла тăсăлать

Ачасен ыр кăмăллăх марафонне хутшăнакан предприятисемпе организацисем, уйрăм çынсем хушăнсах пыраççĕ. Çак вăхăта асăннă марафона хутшăнса ятарлă счет çине районĕпе пĕтĕмпе 58758 тенкĕ укçа куçарнă. Укçа куçарнисем хушшинче район администрацийĕ (10435 тенкĕ), ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ (1395 тенкĕ), ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Çынсене социаллă пулăшу паракан районти центрĕ» РГУ (1350 тенкĕ), РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ (4168 тенкĕ), выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци (2640 тенкĕ), район администрацийĕн финанс пайĕ (1980 тенкĕ), ветерансен районти хорĕ (750 тенкĕ), «Пучах» ООО (3000 тенкĕ), «ВАСЕМ» ООО (2000 тенкĕ), районти тĕп больница (16930 тенкĕ), «Россельхозбанк» уйрăмĕ (1250 тенкĕ), çамрăк техниксен станцийĕ (2000 тенкĕ), «РГС-Поволжье» ООО (3000 тенкĕ), ЧР Финанс министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ (500 тенкĕ), «Свобода» хуçалăх (3000 тенкĕ), районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ (1000 тенкĕ), Хорнуй ял тăрăхĕ (1460 тенкĕ), «Ника» ООО (1000 тенкĕ), пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ертсе пыракан компанийĕ (900 тенкĕ).

Ачасене тăхăнмалли тумтирпе пулăшма кăмăл тунисем хушшинче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче ĕçлекенсем, Муркашра пурăнакан Е.П. Иванова, Ю.Д. Вязова, Е.С. Куликова, Е.В. Круглова, А.А. Данилова, В.А. Никитина, М.В. Виноградова, Шаптак ялĕнче пурăнакан А.Т. Абрамова, Çатракассинчи Е.Н. Семенова.

**Хамăр инф.**

Яваплă органсен ертӳçисем пĕлтереççĕ

## Уявсем мĕнпе асра юлчĕç?

***Пысăк савăнăç ытамĕнче Çĕнĕ çул уявĕсем сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç. Ăна кĕтсе илессине халăх пысăк уяв вырăннех йышăнать. Ку тĕлĕшпе коллективсенче тăтăшах çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елка илемне ӳстерме чылайăшĕ электричество çутипе, çуртасемпе, пиротехника изделийĕсене усă курать. Халĕ каланине шута илсе çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе, уяв савăнăçне пула тимлĕхе çухатнипе тĕрлĕрен чрезвычайлă лару-тăрусем сиксе тухассипе пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Кăçалхи Çĕнĕ çул мĕнле иртрĕ-ха, мĕнпе асра юлчĕ? Çак ыйтусем çине хурав шыраса эпĕ район администрацийĕн чрезвычайлă лару-тăру тата гражданла оборона енĕпе ĕçлекен пайĕн ертӳçине Н. МИЛЮТИНПА, районти патшалăх пушар надзорĕн пуçлăхĕпе И. СМИРНОВПА тĕл пулса калаçрăм.***

**Н. МИЛЮТИН:**

– Йывăр вăхăтра этемлĕх яланах мобилизациленет. Çĕнĕ çулăн савăнăç ытамне лекни те пĕр вăхăтрах хăйне евĕр йывăрлăх та. Çакна районти чрезвычайлă лару-тăру служби тĕплĕ хатĕрленчĕ, пулас инкексемпе кĕрешме хатĕр пулчĕ. Çавна курахтăр кану кунĕсенче уяв савăнăçне пĕтĕмĕшле сирекен инкексемех пулмарĕç. Районти аварипе çăлав служби мĕн палăртнă ĕçсене тивĕçлĕ шайра туса иртерчĕ. Кану кунĕсем вактĕвексĕр пулмарĕç, анчах вĕсенчен чылайăшне районта пурăнакансем сиссе те юлмарĕç. Акă кану кунĕсенче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче электричество çути вăхăтлăха сӳнни вăхăтра туса иртернĕ ĕçсене пула чрезвычайлă лару-тăру патне çитмерĕ. Муркашри хаттерсене ăшă шывпа тивĕçтерессине пулнă пĕчĕк кăлтăксем те уяв сĕмне витĕм кӳреймерĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, районта çак кунсенче лăпкăлăх хуçаланчĕ пулин те, январĕн 7-мĕшĕнче 11 сехет тĕлĕнче Ятман плотини çинче 51 çулхи арçын виллине тупрĕç.

**И. СМИРНОВ:**

– Николай Панфилович каланипе килĕшетĕп. Пушар хурал ĕçченĕсем те уяв кунĕсенче инкексемпе кĕрешме тухни пулман. Çав вăхăтрах патшалăх пушар надзорĕн инспекторĕсен вăйĕпе Çĕнĕ çул уявĕсем, Сурхури иртернĕ вырăнсене тĕрĕслесех тăтăмăр. Çĕнĕ çул уявĕсенчи тĕрĕслевсенче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн административлă 4 протокол çыртăмăр. Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманран Хорнуй ял тăрăхĕнчи Платкассинчи тата Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Якаткассинчи ял клубĕсене ĕçлеме чарма тиврĕ. Тавах Турра, Çĕнĕ çул уявĕсем пĕтĕмĕшле пысăк пушарсемсĕрех иртрĕç. Вăхăтра асăрханипе кăна Мăн Сĕнтĕрти Е. Иванова предпринимателĕн «Потап» столяр цехĕнче пушар алхасасчĕн пăрăнса иртрĕмĕр. Инкек сăлтавĕ – электропроводка монтаж тунă чух пушар хăрушсăрлăх правилине пăхăнманни. Иртнĕ çулсенчи тĕслĕхсем çине таянса çакна та калас килет: çанталăк хăвăрт сивĕтнĕ май çынсем пӳрт-çуртсене хăйсем ăсталанă электроприборсемпе хутса ăшăтма пуçлаççĕ. Чылай чух электроприборсем юсавсăр. Ку вăл – инкексен пуçламăшĕ. Çавăн пекех сивĕ çанталăка пула вăйлă хутнă кăмакасем те «хĕрлĕ автана» çул параççĕ. Вăйлă хутнипе çурăлнă кăмакасенчен çулăм тулалла тухать тата асбест мăрьесем сиксе каяççĕ. Çак хăрушлăха çынсен асрах тытасчĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

## Чăваш Республикинчи çĕнĕ урамсене (ялсене) электрификацилессине хăвăртлатасси çинчен

Муниципалитет пĕрлĕхĕсене халăха электричествăпа тивĕçтерес енĕпе вĕсене панă полномочисене пурнăçлама патшалăх енчен пулăшас тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

муниципалитет пĕрлĕхĕсене Чăваш Республикинчи çĕнĕ урамсене (ялсене) электрификацилессине хăвăртлатма пулăшас енĕпе хушма финанс тата йĕркелӳ мерисене йышăнмалла, çав шутра:

2011 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен çĕнĕ урамсен электричество тытăмĕсене яланхи тата çирĕп йĕркепе ĕçлеттерессине куçарассине вĕçлесси;

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

## Чăваш Республикинче экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли хушма мерăсем çинчен

Чăваш Республикинче экологи хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсене тĕпрен татса парас тата социаллă пурнăçпа культура сферисене, общество инфратытăмне аталантармалли май пур таран лайăх условисем туса хурас тĕллевпе **çапла йышăнатăп**:

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

республикăн тĕллевлĕ «Чăваш Республикинче 2010-2015 çулсенче экологи хăрушсăрлăхне çирĕплетесси» программине хатĕрлесе çирĕплетмелле, унта çак мероприятисене пăхса хăвармалла:

производствăпа йăлари каяшсене тирпейлемелли тата вырнаçтармалли пысăк технологиллĕ комплекс тумалли проекта пурнăçласси;

Чăваш Республикин «Тасатакан биологи сооруженийĕсем» патшалăх унитари предприятийĕн тасатакан сооруженийĕсен реконструкцине хăвăртлатасси;

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Фермăсенчи хĕл кунĕсем

## Ăнăçлăрах ĕçлемелле

2009 çулхи Çĕр ĕçченĕсен çулталăкĕ 2010 çулхипе улшăнчĕ. Мĕн кĕтетпĕр эпир кăçал, мĕн çине таянса ĕçлейретпĕр? Фермăсенчи выльăхсен продуктивлăхне пăхсан тата хĕл валли янтăланă апат хисепĕпе пахалăхне шутласан, алă усмаллих курăнмасть. Пурнăç кăларса тăратакан çĕнĕлĕхсене тивĕçлĕ йышăнса ыранхи куна пăхса ĕçлемелле. Ăна валли пирĕн условисем çук мар. Çакна фермăсенчи хĕл кунĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Выльăх пăхакансен ответлă тапхăрĕ пырать. Çак вăхăтри производство – çуллахи-кĕркунехи ĕçсен кăшăлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче халĕ иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетессипе, малашлăх чикĕсем палăртассипе ĕçлеççĕ. Çывăх кунсенче кунта кашни ыйту çинех конкретлă хурав пулĕ. Иртнĕ çул пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пĕтĕмпе 9211,4 тонна сĕт, 1489,9 тонна ăш-какай туса илчĕç. Пĕтĕмĕшле кăтартусем 2008 çулхинчен ӳсĕмлех мар. Ку вара шухăшлаттарать.

Выльăхсен ӳт хушаслăхĕ те иртнĕ çул унччченхи шайрах юлчĕ, майракаллă шултра выльăхсен ӳсрĕ те, сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 339 грамм, майракаллă шултра выльăхсен – 559 грамм.

**А. ПЕТРОВ.**

Гражданасене йышăнаççĕ

## «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене 2010 çулхи январь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
|---|---|---|
| Январĕн 15-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Юрий Александрович ИВАНОВ,** «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ |
| Январĕн 19-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ,** политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Январĕн 22-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи |
| Январĕн 26-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Борис Васильевич АНДРЕЕВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ |
| Январĕн 29-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Леонид Николаевич АНДРЕЕВ,** депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, районти тĕп больница врачĕ |